Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

*88 (7942) №* ✻ *Юн кун, 2011 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 9-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

## «Çынсемпе çывăхрах пулма тăрăшатпăр»

**Ыран – Шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕн кунĕ**



***Кăçалччен Милици кунĕ пулнă уявăн ячĕ пăрахăçланни çĕр-шыври Шалти ĕçсен министерствинче пулса иртекен реформăпа çыхăннă. Çак реформăпах акă республикăри районсенче пулнă шалти ĕçсен пайĕсенчен хăшĕсене пĕрлештерчĕç те. Пирĕн районти шалти ĕçсен пайĕ вара Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ пулса тăчĕ.***

***Ятсем улшăннипе сотрудниксен тĕп тĕллевĕсемпе куллен татса памалли ыйтусем улшăнман. Хăйсен професси уявне вĕсем мĕнле кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ? Кун пирки Муркаш районĕнчи пай пуçлăхне Евгений Иванович ПЛЕЧОВ полици подполковникне каласа пама ыйтрăмăр:***

– Пирĕн кулленхи ĕçре профилактика енне вăйлатасси пысăк вырăн йышăнать. Район территорине экономикăлла хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси, организациленĕ преступленисене хирĕç кĕрешесси те вăй хурса ĕçлеме хистет. Юлашки çулсенче терроризмпа экстремизма хирĕç кĕрешмелли мелсемпе формăсене çĕнетсе, вăйлатса пырассипе те тăрăшатпăр.

**(Вĕçĕ 4-мĕш стр.)**

**Сăн ӳкерчĕкре: оперативлă шырав ушкăнĕн оперуполномоченнăйĕ Александр Юрьевич Степанов, следстви уйрăмĕн ертӳçи Иван Алексеевич Васюхин (лараççĕ), çул çитменнисемпе ĕçлекен уйрăмăн ертӳçи Виктор Валерьевич Алексеев тата Алексей Валерьевич Чернов следователь.**

**ШАЛТИ ĔÇСЕН ПАЙĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси кунĕ – Раççей Федерацийĕн шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Обществăлла йĕркелĕхе сыхласси, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне, вĕсен Конституципе панă прависене хӳтĕлесси – çăмăл ĕç мар. Çирĕп чунлă, хастар та хăюллă çынсем кăна суйласа илме пултараççĕ çак профессие. Районти лăпкăлăха сыхлас, преступлени çулне пӳлес, тунă преступленисене уçса парас тесе куннеçĕрне пăхмасăр ĕçлетĕр. Нимĕнле йывăрлăха, нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр хăвăрăн тивĕçĕре пысăк яваплăхпа пурнăçлатăр эсир. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те хăвăрăн професси тивĕçне чунчĕре хушнă пек пурнăçласса шанас килет. Кунта сире право йĕркине сыхлакан органсен ветеранĕсен опытне ăша хывни те пулăшса пырĕ. Чăтăмлăх та, çивĕчлĕх те çиттĕрччĕ сирĕн умри тĕллевсене пурнăçлама.

Сывлăхăр сирĕн пурин те çирĕп пултăрччĕ. Ăнăçу пурнăç çулне уçсах пытăр. Ĕçлес кăмăл пĕрре те ан иксĕлтĕр. Килте вара сире яланах ăнланччăр, юратчăр. Пурсăра та телей сунатăп.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

**Указ**

## Республика кунĕ – Шупашкар районĕнче

Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев 2011 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче 97-мĕш номерлĕ Указа алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн муниципалитет пĕрлешĕвĕсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне тухăçлă витĕм кӳме, вĕсен инвестици сăн-сăпатне пуянлатма «Чăваш Республикин патшалăх уявĕ çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн Республика кунне 2012 çулта Шупашкар хулинче тата муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен уяв мероприятийĕсене ирттерме ирĕк илес тĕлĕшпе йĕркеленĕ конкурсĕнче çĕнтернĕ Шупашкар районĕнче уявлама палăртнă.

Республика пуçлăхĕ Министрсен Кабинетне уяв мероприятийĕсен планне хатĕрлеме, Шупашкар район администрацине конкурс условийĕсемпе килĕшӳллĕн ялсен обществăлла инфратытăмне аталантармашкăн укçа-тенкĕ уйăрма майсем тупма, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене çирĕпленнĕ йĕркепе çитес çул Республика кунне халалласа «Акатуй» уявĕсене, культура тата спорт мероприятийĕсене йĕркелеме сĕннĕ.

**Район администрацийĕнче**

## Хисеп грамотипе наградăланă

Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕ ыйтнипе район администрацийĕн 2011 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнчи 1038 № йышăнăвĕпе **Владислав Сергеевич ИВАНОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Çынсен сывлăхне сыхлас ĕçе тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2011 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнчи 1042 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Надежда Александровна АРТЕМЬЕВĂНА**, районти тĕп больницăн васкавлă медицина пулăшăвĕн уйрăмĕн врачне;

– **Инна Федоровна КОРОЛЬКОВĂНА**, районти тĕп больницăн кардиолог врачне, терапи уйрăмĕн заведующине;

– **Глафира Порфирьевна КУЗНЕЦОВĂНА**, Мăн Сĕнтĕрти районти 2-мĕш номерлĕ больницăн тĕп бухгалтерне.

**Саламлатпăр**

Муркаш ялĕнче пурăнакан **Владимир Михайлович РУБЦОВА** 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Мĕн шутланисем пурнăçлансах пыччăр.

**Пысăк салампа: ООО «Газпром межрегионгаз Чебоксары» Етĕрнери территори участокĕн коллективĕ.**

**Кĕске хыпарсем**

## 6 мăшăр пĕрлешĕ. Хальлĕхе...

Тĕрлĕ числосене асамлă вăйпа танлаштарни – авалтан пыракан йăла. Вăл е ку кун çын пурнăçĕ çине витĕм кӳрет тени пур. Кăçалхи çамрăк мăшăрсене телейлĕ çемье çавăрнине паллă тума хăйне евĕр паллă кун килет: 11.11.11. Çитес эрне кун район администрацийĕн ЗАГС пайĕнче 6 мăшăр хăйсем ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнма килĕшнине çирĕплетме кăмăл турĕç.

## «Шуçăм» палăрчĕ

Чӳк уйăхĕн 3–5-мĕшĕсенче Чулхула облаçĕнче «Раççей чун-кăмăлĕ» халăх пултарулăх фестивалĕ иртрĕ. Унта Чăваш Ен пуянлăхне Москакассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуçăм» халăх юрăпа ташă ансамблĕ хӳтĕлерĕ. Гала-концертра вĕсем икĕ номерпе паллаштарнă. Конкурс йĕркелӳçисем пирĕн артистсен пултарулăхне тав çырăвĕпе хакланă.

## 119 ваканси пур

Çулталăк пуçланнăранпа районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен Центра ĕç шыраса 1145 çын пынă. Вĕсене ĕç шыракансем тесе шута илнĕ. Вăл шутран 658-шĕ – 14–18 çулсенчи ӳсĕмри, вĕренӳрен пушă вăхăтра тата çуллахи каникулта ĕçлес кăмăллă шкул ачисем. 389 çынна кăна ĕçсĕр тесе йышăннă.

Чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне халăха ĕçпе тивĕçтерекен Центрта ĕçсĕррисем 59 çын учетра тăраççĕ. Ĕçсĕрлĕх шайĕ – 0,27 процент. Ĕçсĕррисенчен 39-шĕ – хĕрарăмсем, 30-шĕ – 16-29 çулсенчи çамрăксем. Кăçалхи вунă уйăхра 942 çынна ĕçе вырнаçтарнă. Вĕсенчен 655-шĕ – вĕренӳрен пушă вăхăтра тата çуллахи каникулта ĕçлес кăмăллă шкул ачисем.

Чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне халăха ĕçпе тивĕçтерекен Центр районта 119 ĕç вырăнĕ (ваканси) пуррине пĕлтерет.

**Республикăра**

## Граждансене социаллă пулăшу пама

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче граждансен хăш-пĕр категорийĕсем валли пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн уйăхсерен укçан тӳлеме республикăна федераллă бюджетран хушма укçа-тенкĕ килсе çитнĕ. Пĕтĕмĕшле сумма – 105,2 миллион тенкĕ.

2011 çулта малтан ку тĕллевпе республикăна федераллă бюджетран 529,2 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă пулнă. Кăçалхи октябрь уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн Финанс министерствипе калаçса татăлнă май Чăваш Республики валли хушма укçа татах 166,5 миллион тенкĕ уйăрма май килнĕ. Кунсăр пуçне çак кунсенче асăннă суммăсемсĕр пуçне граждансен хăш-пĕр категорийĕсем валли пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă усугăсемшĕн тӳлеме татах 105,2 миллион тенкĕ килсе çитнĕ. Ку тĕллевпе çапла вара кăçал пĕтĕмпе 800,9 миллион тенкĕ уйăрнă ĕнтĕ.

Асăннă укçа-тенкĕ республикăри 114 пин ытла çынна, вăл шутра Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕсемпе участникĕсене, тĕрлĕ çапăçусене хутшăннисене, «Жителю блокадного Ленинграда» паллăпа наградăланисене, инвалидсене, инвалид ача пур çемьесене, Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула радиаципе сиенленнĕ çынсене тата ыттисене хăй вăхăтĕнче тата туллин адреслă пулăшу пама май туса парать.

**Муркашра Тыр-пул уявĕ иртрĕ**

## Ĕç кăтартăвĕсем малашлăха çул уçаççĕ

Ĕçне пĕлекен хресчене кăçал çут çанталăкăн кашни саманчĕ тулăх тыр-пул туса илме, ăна тирпейлĕ те вăхăтра пуçтарса кĕртсе кĕлете упрама хума май пачĕ. Малта пыракан çĕнĕ технологисемпе анлăн усă курса тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене, çĕр улмипе пахча çимĕçе, тымар çимĕçе тухăçлă туса илнĕ çĕр ĕçченĕ Тыр-пул уявне те чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче пĕр çын пек пуçтарăнчĕ. Çумăрлă кĕркуннехи çак кун та уй-хир ĕçĕсене пĕтĕмлетме валлиех хĕвеллĕ те ăшă пулчĕ. Çавна кура ирлесех Муркашра хаваслă юрă-кĕвĕ янăрани те уява пыраканăн кăмăлне çĕклерĕ, район администрацийĕпе «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнчи лапамра йĕркеленĕ куравра ыттисен ĕçĕ çине пăхса çĕнĕ шухăшсем çуратрĕ.

Уяв сюжечĕпе «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче йĕркеленĕ сцена çине район ертӳçисем, республикăран тата кӳршĕ районсенчен килнĕ хăнасем, ĕç паттăрĕсем хăпарчĕç. Пухăннисене Тыр-пул уявĕ уçăлни пирки пĕлтерсе район пуçлăхĕ Ю. Иванов саламларĕ, тухăçлă ĕçленĕшĕн тав турĕ, умри чикĕсене палăртса Муркашсем вĕсене те çĕнессе шанни пирки пĕлтерчĕ.

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)**

**Çырăнтару – 2012**

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2012 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак: 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Хаçат редакцийĕ.**

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Патшалăх коммуналлă хуçалăхра йĕрке тума пикенчĕ

**Ертсе пыракан компанисен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă ыйтусем паян пĕрремĕш вырăна тухса тăраççĕ. Ку тĕлĕшпе республика Президенчĕ вĕсене татса парассинчен пăрăнман пур енсем тата çак ĕçсене тĕрĕслесе тăрассишĕн яваплă сăпатсем (лицо) умне çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнчи монополизма сирес ĕçе тĕплĕ хатĕрленме, халăха информаципе тивĕçтерессине, ăнлантарассине вăйлатма тĕллев лартнă. «Хура ĕç» тăвакансене, «пĕр кунлăх» фирмăсене тата тĕрлĕ йышши ултавçăсене çак тытăмран аяккарах сирес шухăшпа хальхи вăхăтра ертсе пыракан компанисене çирĕп тĕрĕслеме хатĕрленеççĕ. Çăмăл мар çак ĕçе вара çурт-йĕр хуçисене хăйсене явăçтармасăр пурнăçлама май çук. Ăна валли кашнин лайăх пĕлӳпе «хĕç-пăшалланмалла». Вĕсенчен чи пĕлтерĕшлисем çинчен Чăваш Енĕн Тариф тата конкурентлă политика патшалăх службинче ăнлантарчĕç.**

**Коммуналлă пулăшусен хăш тĕсĕсем валли тарифсем çирĕплетеççĕ?**

Сивĕ тата вĕри шыв, шыв юхтарасси (канализаци), электричество, газ, хутса ăшăтасси (ăшă энергийĕ) валли.

**Тарифсене шутланă чухне мĕнле тăкаксене тĕпе хураççĕ?**

Тарифсене йĕркеленĕ чухне коммуналлă пулăшуран пухнă укçан кирлĕ виçинчен çак тăкаксене шута илеççĕ:

– укçа-тенкĕ тăкакĕсем (çав шутра энергоресурссем – газ, çĕр кăмрăкĕ, мазут, электроэнерги – туяннипе çыхăннă тăкаксем);

– рабочисен ĕç укçи тата социаллă тӳлевсем;

– тĕп хатĕрсене юсассипе çыхăннă тăкаксем;

– тĕп укçа-тенкĕ тата унпа çыхăнман активсен амортизацийĕ;

– ытти тăкаксем (налук, аренда, лизинг тата ытти тӳлевсем).

**Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳленĕ регионра патшалăх пулăшăвĕпе усă куракансем йышлă-и?**

Халăхăн пĕтĕм йышĕнчен – 22,5 процент. Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусен тăкакĕсемшĕн тивекен субсидисен вăтам виçи 2010 çулхипе танлаштарсан 15 процент ӳснĕ, паянхи кун тĕлне пĕр çын пуçне 865 тенкĕпе танлашать.

**Коммуналлă пулăшусен тарифĕсем мĕнле тăтăшлăхпа ӳсеççĕ?**

Сивĕ тата вĕри шывпа, ăшăпа, электричествăпа, газпа, шыв юхтарассипе çыхăннă коммуналлă пулăшусемшĕн тарифсене çулталăклăха е унран кая мар вăхăтлăха çирĕплетеççĕ.

**2011 çулшăн тарифсене мĕнле майпа йĕркеленĕ?**

Коммуналлă комплекс тата ăшăпа тивĕçтерекен организацисемшĕн 2011 çул валли тарифсене Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн 2010 çулхи 42-мĕш номерлĕ хушăвне шута илсе йĕркеленĕ. Унпа килĕшӳллĕн граждансен коммуналлă тӳлевĕсем пĕр пек лару-тăрура 2010 çулхи виçерен 15 процентран пысăкрах пулмалла мар.

Коммуналлă пулăшусен тӳлевĕ кăçал 2010 çулхи шайĕран 10 процент сахалрах ӳснине палăртса хăвармалла.

Раççей Федерацийĕн Правительствин хушăвне пурнăçласа Служба вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем панă кăтартусем тăрăх пĕтĕм муниципалитет тытăмĕнче – вĕсем вара республикăра 296 – граждансен коммуналлă тӳлевĕсен анализне иртерет. Ăна 15 процентран хăпартса ӳстернĕ тĕслĕхсем çук.



**Граждансем коммуналлă услугăсемшĕн тӳлекен укçа калăпăшĕ ӳсни, малтанхи çулпа танлаштарсан, процентпа.**

2011 çулта, 2010 çулхипе танлаштарсан, республикăра тарифсем ăшăшăн вăтамран 14,7 процент, шывпа тата шыв юхтарассипе тивĕçтерессишĕн 16,7 процент, йăлари каяша утилизацилессишĕн 12 процент, электроэнергишĕн 9,7 процент, çут çанталăк газĕшĕн 15 процент ӳснĕ.

2011 çул валли йышăннă тарифсем Чăваш Республикинче Федерацин Атăл çи округĕнчи рейтингра пĕчĕк позицие сыхласа хăварчĕç.

**2012 çулта пире мĕнле улшăнусем кĕтеççĕ?**

Январĕн 1-мĕшĕнчен коммуналлă пулăшусен тарифĕсем 2011 çулхи шайрах юлаççĕ. 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен электроэнерги тарифĕ 6 процент, çулталăк тăршшĕне 3 процентран ытла мар ӳсет, çут çанталăк газĕ – 15 процент. Ытти пулăшусемшĕн вара – икĕ тапхăрпа: июлĕн 1-мĕшĕнчен 6 процент тата сентябрĕн 1-мĕшĕнчен 6 процент.

**Электроэнерги валли дифференциллĕ тарифа мĕнле йĕркепе çирĕплетеççĕ?**

Талăк зонисенчен (сехетсенчен) килекен тариф электричествăшăн тĕрлĕрен пулма пултарать. Ăна усă курнă вăхăт тăрăх çирĕплетеççĕ. Тĕслĕхрен, 2011 çулхи январьте Вăтам Атăлăн пĕрлештернĕ энергосистемăшĕн талăк зонисем çапларах пулнă: тĕркĕш вăхăт – 8–11, 16–19, çурма тĕркĕш вăхăт – 11–16, 19–23, 7–8 сех., çĕр – 23–7 сех. Чи хаклă тариф – тĕркĕш зонăра, йӳнĕреххи – çурма тĕркĕш зонăра, чи йӳнни – çĕрлехи зонăра.

**Халăх патне çитекен çут çанталăк газĕн курттăм мар хакĕ шутне мĕн кĕрет?**

Ăна çакăн пек шутласа палăртаççĕ: газăн курттăм хакĕ + ăна илсе çитерессипе çыхăннă тариф + тивĕçтернĕ-вырнаçтарнă чухнехи пулăшу.

Çут çанталăк газĕн хакĕ çине витĕм кӳрекенни – унăн курттăм хакĕ.

**Капиталлă строительствăна хывнă укçа-тенкĕне мĕнле майпа тĕрĕслесе тăраççĕ?**

Ресурс туяннă чухнехи тăкаксемпе пĕрлех тĕп тата кулленхи юсав ĕçĕсем, инженери инфратытăмне юсавлă тытса тăма хывнă укçа-тенкĕ те тариф шутне кĕреççĕ. Тарифсен 2011 çулхи йышăнăвĕпе инвестицисем 1 миллиард та 800 миллион тенкĕне çитнĕ, çав шутран тĕп юсав ĕçĕсем валли – 946 миллион тенкĕ, тарифри хушма тӳлевсен шучĕпе инвестици программисене пурнăçлама – 808 миллион тенкĕне яхăн.

Кăçал инвестици программисем 33 предприятире пурнăçланаççĕ (йĕркелесе пыракан организацисен пĕтĕм йышĕн 12,4 проценчĕ).

Инвестици ресурсĕсене тĕрĕслесе тăрас тĕллевпе Служба кварталсерен çак укçа-тенкĕпе усă курнин анализне (мониторинг) ирттерет. Унăн пĕтĕмлетĕвне Тарифсен федераци службинче пăхса тухаççĕ.

**Вĕри шыв хакĕ мĕнрен килет?**

Вĕри шыв тарифĕсен шутне 1 кубла метр сивĕ шыв хакĕ тата ăна ăшăтнă чухнехи тăкаксем кĕреççĕ. Ăна 1 кубла метр шыва нормативсемпе право акчĕсенче ыйтнă температура таран çитерме кирлĕ ăшă энергийĕн тарифĕн произведенийĕпе палăртаççĕ.

**Муниципаллă районсенче тарифсен виçи мĕншĕн пĕр пек мар?**

Коммуналлă пулăшусен тарифĕсен уйрăмлăхĕ халăха кӳнĕ пулăшу, оборудованисен энерги тăкаклас, вăл тата сеть кивелсе юрăхсăра тухнин виçисенчен килет.

**Коммуналлă ресурссем валли шутлав приборĕсем вырнаçтарни мĕн парать?**

Çуртра пĕрлехи тата хваттерсенче пурăнакансем хăйсем тĕллĕн уйрăм шутлав приборĕсене вырнаçтарни граждансен коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлекен укçи-тенкине сисĕнмеллех чакарать. Республикăри çуртсенчи пĕрлехи шутлав приборĕсене нумай хваттерлĕ çуртсенче вăтамран 70 процент таран вырнаçтарнă, çав шутран электроэнергие шута илес тĕлĕшпе – 97 процент, ăшă энергине – 53 процент, вĕри шыва – 63 процент, сивĕ шыва – 42 процент.

Çакă граждансен ăшăшăн тивекен тӳлевне 2010 çулта 10–12 процент таран чакарма май панă, датчиксемпе таймерсем вырнаçтарнипе кура электроэнергишĕн тӳлеме 10 процент сахалрах укçа-тенкĕ тăкакланă.

**Çурт-йĕрпе пăхса тăракан организацисем информацие халăха пĕлтерессине пирĕн республикăра камсем тĕрĕслесе тăраççĕ?**

Асăннă организацисем информацие халăх патне çитерес стандарта мĕнле пăхăннине тĕрĕслес ирĕк кăçалхи июль уйăхĕнчен Службăн та пур. Вăхăтсене пăхăнманнине кура тата информацие уçса паман тĕслĕхсемпе çитменлĕхсене пĕтермелли пирки паянхи кун тĕлне 39 организацие асăрхаттарнă.

**Коммуналлă пулăшусемпе усă куракан вĕсемпе тивĕçтерекен организацисене тарифа кĕртнĕ пулăшусен производствин тăкакĕсемпе паллаштармашкăн ыйтма пултарать-и?**

Гражданинăн коммуналлă ресурс тарифĕсен шутне кĕртнĕ тăкаксем мĕнле майпа пуçтарăннипе е улшăннипе ресурспа тивĕçтерекен уйрăм организацире кăсăкланма ирĕк пур.

Раççей Правительстви çирĕплетнĕ информацие уçса парассин стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн коммуналлă комплекс тата ăшăпа тивĕçтерекен организацисен – Служба тариф çирĕплетнĕ предприятисен хăйсем сĕнекен пулăшупа, тарифсемпе, финанспа хуçалăх ĕçĕхĕлĕпе çыхăннă информаци патне чăрмав пулмалла мар.

**Хаксене сăнаса тăракан органсен тĕрĕслевĕсем мĕнле тăтăшлăхпа пулаççĕ?**

Планпа пăхнă тĕрĕслевсем республика прокуратурипе çулталăклăх килĕшсе татăлнă график тăрăх иртеççĕ, плана кĕменнисем – тарифсене виçерен ирттерсе хăпартни е пĕчĕклетни çинчен уйрăм çынсем е юридици сăпачĕсем пĕлтерсен. Чăваш Енĕн патшалăх çурт-йĕр инспекцийĕ кăçалхи 9 уйăхра граждансен 2244 çырăвне пăхса тухнă, планпа пăхнă тата плана кĕртмен 428 тĕрĕслев йĕркеленĕ, çакăн пек 150 мероприятие прокуратура органĕсемпе пĕрле ирттернĕ.

**2011 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче Чăваш Ен Президенчĕ «Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу илнĕ чухне республика çыннисен саккунлă интересĕсене хӳтĕлемелли хушма мерăсем çинчен» Указа алă пусрĕ. Çак документ халăха мĕн парать?**

Çак документпа килĕшӳллĕн регионра отрасль порталне туса хума йышăннă. Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнчи пур предприяти пирки те информацие çакăнта тупма май пулĕ. Ертсе пыракан компанисем коммуналлă пулăшусен хакĕсем, пурнăçланă ĕçсем çинчен халăха ун урлă пĕлтерсе тăрĕç. Мĕншĕн тата мĕнле тарифсемпе тӳленине вĕсен пĕлмеллех. Ертсе пыракан компанисен ĕçĕ-хĕлĕн мониторингне йĕркелессине те шута илнĕ Указра. Унпа килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсенчи тĕп юсав ĕçĕсене пурнăçлама пулăшса пыракан фонд, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхшăн тӳлемелли укçана тарифсемпе килĕшӳллĕн çирĕплетнĕ чухне тавлашуллă ыйтусем тухса тăрсан татса пама Правительство комиссийĕ туса хурĕç.

**ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ**




**укçана управляющи компанисен Чăваш Ен Патшалăх çурт-йĕр инспекцийĕ хутшăннипе çурт-йĕр хуçисене каялла тавăрса пама тивнĕ 2009 çулта, 14,8 млн. тенкĕ – 2010 çулта, 5,6 млн. тенкĕ – 2011 çулта.**

**ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ**

**10233 нумай хваттерлĕ çурта шута илнĕ паянхи кун тĕлне Чăваш Республикин çурт-йĕр фонденче. Пĕтĕмĕшле тăваткал метрсем – 15 млн. яхăн, уйрăм çуртсен лаптăкĕ – 14 млн.**

**130 управляющи компани, 498 ТСЖ тата 60 ЖСК пăхса тăрать паян республикăн çурт-йĕр секторĕнчи нумай хваттерлĕ çуртсене.**

ПĔЛНИ ПАСМАСТЬ

**КОММУНАЛЛĂ ПУЛĂШУШĂН ÇИРĔПЛЕТНĔ ТАРИФСЕМ ПИРКИ ĂÇТА ПĔЛМЕ ПУЛАТЬ:**

▲ Тарифсен патшалăх службинче, çавăн пекех унăн Интернетри сайтĕнче: http://www.tarif.cap.ru. Патшалăхăн çурт-йĕр инспекцийĕн сайтĕнче: http://www.goszhil.cap.ru, http://www.jkh.cap.ru портал çинче.

▲ Официаллă пичет кăларăмĕнче – «Вести Чувашии» хаçатра.

▲ Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче.

▲ Коммуналлă пулăшупа тивĕçтерме килĕшӳ тунă управляющи компанисенче, çав шутра вĕсен сайтĕнче.

**ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ**



**Çурт-йĕр законодательствине пăснă 3002 тĕслĕхе çиеле кăларма тӳр килнĕ Чăваш Ен Патшалăх çурт-йĕр инспекцийĕн кăçалхи тĕрĕслевсем вăхăтĕнче. Çитменлĕхсене пĕтерме хушса 839 предписани çырнă, 933 пин тенкĕлĕх административлă майпа штрафланă.**

**Коммуналлă услугăсен 2011 çулхипе танлаштарсан 2012 çулхи тарифĕсем улшăнассин прогнозĕ, процентпа**

| Уйрăм çынсем валли хаксем (тарифсем) | 01.07.2012 | 01.09.2012 |
|---|---|---|
| электроэнерги | 105,8 | - |
| ăшă энергийĕ | 106,0 | 105,2 |
| шывпа тивĕçтересси, канализаципе усă курасси | 106,0 | 104,2 |
| çут çанталăк газĕ | 115,0 | - |

**2011 çулхи сентябрĕн вĕçĕ тĕлне Атăл тăрăхĕнчи федераллă округри регионсенче коммуналлă услугăсен хăш-пĕр тĕсĕсен тарифĕсем мĕнле пулни (Чăвашстат даннăйĕсем)**

| | Газ, уйăхне пĕр çын пуçне | Электроэнерги, электроплитасемсĕр хваттерсенче, 100 квт.сех | Ăшă шыв, уйăхне пĕр çын пуçне | Сивĕ шыв тата канализаци, уйăхне пĕр çын пуçне | Пĕтĕмĕшле лаптăка хутса ăшăтни, тăв. м. |
|---|---|---|---|---|---|
| Чăваш Республики | 41,01 (2-мĕш вырăн) | 208,00 (3-мĕш вырăн) | 246,79 (4-мĕш вырăн) | 163,45 (4-мĕш вырăн) | 18,89 (6-мĕш вырăн) |
| Пушкăрт Республики | 58,56 | 191,00 | 190,04 | 147,59 | 15,83 |
| Çармăс Республики | 56,80 | 235,00 | 236,63 | 156,83 | 18,16 |
| Мăкшă Республики | 55,01 | 237,00 | 268,73 | 164,40 | 16,94 |
| Тутар Республики | 41,88 | 243,00 | 193,86 | 195,11 | 14,22 |
| Удмурт Республики | 38,88 | 242,00 | 249,72 | 122,01 | 19,67 |
| Пермь крайĕ | 43,19 | 249,00 | 256,22 | 243,96 | 23,22 |
| Киров облаçĕ | 54,63 | 242,00 | 310,08 | 212,17 | 19,78 |
| Чул хула облаçĕ | 55,46 | 230,00 | 289,98 | 218,32 | 26,76 |
| Оренбург облаçĕ | 63,45 | 187,00 | 283,67 | 207,19 | 21,65 |
| Пенза облаçĕ | 69,46 | 220,00 | 291,35 | 198,20 | 16,05 |
| Самара облаçĕ | 80,47 | 255,00 | 327,74 | 202,27 | 19,55 |
| Саратов облаçĕ | 66,13 | 228,00 | 253,65 | 226,17 | 19,83 |
| Ульяновск облаçĕ | 52,64 | 237,00 | 326,27 | 204,23 | 19,26 |

# Ĕç кăтартăвĕсем малашлăха çул уçаççĕ

Муркашра Тыр-пул уявĕ иртрĕ



«Хамăр туса илнĕ пахча çимĕç пахарах та, тутлăрах та», – теççĕ Хорнуйĕнче 11 çул хресчен (фермер) хуçалăхĕ тытса пыракан Верăпа Александр Ванюшкинсем.

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

**ЧЫС ТА МУХТАВ**

– Маттур ĕçлерĕр пулсан сирĕн паян туллин савăнма та ирĕк пур. Савăнăр та хăвăр кӳршĕсен ĕçĕсемпе ăнăçăвне пăхса çĕнĕ тĕллевсем палăртăр. Эсир кирек епле çанталăк условийĕсенче те тухăç илме пултарнине кăçал аванах куртăмăр. Апла пулсан пирĕн сирĕнпе малашлăх пур, – терĕ уява уçса Юрий Александрович.

Уй-хир ĕçĕнчи ăнăçăва тĕслĕхсемпе çирĕплетсе уява пухăннисем умĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин доклад туса пачĕ.

– Агропромышленность комплексĕнче хастар та маттур, çĕр ĕçне чунтан парăннă пиншер çын вăй хуни района тивĕçлĕ шайра аталанса пыма пулăшать.

Тыр-пул уявне районти ял хуçалăх ĕçченĕсем кăçал япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Уй-хир ĕçĕнче наука çитĕнĕвĕсемпе пĕлсе усă куракан, ял хуçалăх техникине тăтăш çĕнетсе агротехника ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлекен, çĕр пахалăхне çулсерен хăпартса пыракан, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине куртăмăр.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем кăçал ампар виçипе 36 пин тонна пухса кĕртрĕç. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 25 центнер пулчĕ. Пĕрешкел условисенчех ăна Ильич яч. хис. кооперативра – 32,8 центнера, «Ударникра» - 31,7 центнера, Суворов яч. хис. хуçалăхра 29,1 центнера çитерме пултарчĕç.

Паянхи уява выльăхчĕрлĕх пăхакансем те япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Хĕл тапхăрне обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли районĕпе 8505 тонна утă, 18283 тонна силос, 14000 тонна сенаж янтăланă. Хĕл тапхăрĕнче те тăрăшса ĕçлесен выльăхчĕрлĕхрен çителĕклĕ продукци илесси куç кĕрет.

Уй-хир ĕçченĕсен ăнăçулăхĕпе выльăх пăхакансен тухăçлăхĕ юнашарах пыраççĕ. Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне тăхăр уйăхра 47 центнер аш-какай, 237 центнер сĕт туса илтĕмĕр, кашни ĕнерен вăтамран 3302 килограмм сĕт сурăмăр, – терĕ Владимир Аркадьевич.

Район çыннисене Тыр-пул уявĕпе Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçи – республикăри тĕп патшалăх инженер-инспекторĕ В. Димитриев саламларĕ. Владимир Павлович хастар ĕçченсене ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотисемпе наградăларĕ. Уявра çак чыса Суворов яч. хис. хуçалăхăн тĕп агрономĕ Г. Албутова, «Оринино» хуçалăхăн Патаккассинчи сĕт фермин ертӳçи Р. Блинова, Суворов яч. хис. хуçалăх механизаторĕ В. Яковлев, «Свобода» хуçалăхăн Кашмашри сысна фермин ертӳçи В. Никитин тивĕçрĕç.

Вырмара палăрнă комбайнерсем, ĕçре ырă тĕслĕх пулса тăнă водительсем, уйхир ĕçĕнчен пăрăнман механизаторсем, мал туртăмлă бригадирсемпе уйхир ĕçченĕсем те нумайăн район администрацийĕн дипломĕсене, «Вырма-2011» конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе свидетельствăсене илме пултарчĕç.

Уява килнисем вырма паттăрĕсене алă çупсах чысларĕç. Кунта Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх комбайнерне Радонеж Кузнецова тата Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн комбайнерне Болеслав Никитина ырăпа палăртмалла. Вĕсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Торжествăлла пай хыççăн сцена çинчен художество пултарулăх коллективĕсем уява килнисене хăйсен илемлĕ юрри-ташшипе савăнтарчĕç. Комисси «Расна», «Шуракăш», «Акуча» ансамбльсемпе «Илем» ушкăн маттуртарах пулнине палăртрĕ.

**ПРОДУКЦИ КУРАВĔ**

Тыр-пул уявне пынисен çак кун пĕр вырăнта ларсатăма майĕ те пулмарĕ. Сăлтавĕ – ял хуçалăх продукчĕсен курав-ярмăркки. Ăна ял хуçалăх предприятийĕсенче, шкулсенче, килти хушма хуçалăхсенче кăçал туса илнĕ продукцисенчен йĕркеленĕ. Кашни ял тăрăхĕн хăйĕн вырăнĕ. Акă Москакасси ял тăрăхĕн палаткинче пахча çимĕçрен ăсталанă «Кĕрхи королева», «Солнышко» ача-садĕнче хатĕрленĕ «Саппаслă чĕрĕп» патĕнчен куçа пăрса иртме çук.



Килĕр, туянăр, хăналанăр!

– Çĕнĕ тырăран пĕçернĕ çăкăр техĕмне çитекенĕ çук вара, – терĕ тĕрлĕ çăкăр пуянлăхĕпе савăнăçне пытармасăр Лантăшри çăкăр завочĕн технологĕ Л. Звонкова. Хирĕçлеме сăмах çук.

Ял хуçалăх продукчĕсемпе сутă тăвакан ретре вара халăх хĕвĕшет кăна. Ăнланмалла, çак уяври йӳнĕрех хакпа хĕл валли продукци туянса юлни никамшăн та ытлашши мар.

«Кĕр парнисем-2011» выставка-ярмăрккăра Ильинка, Йӳçкасси, Оринин ял тăрăхĕсем ăстарах пулни уява пынă кашни çыншăн паллă пулчĕ.

**МУРКАШ «КУЛИБИНĔСЕМ»**

Кăçалхи Тыр-пул уявĕ ял çыннисем хăйсен аллипе ăсталанă техникăран уçнă выставкăпа нумайлăха аса юлĕ. Кунта Юнкă тăрăхĕнчен килнĕ Н. Ермаков, В. Пигачев, А. Яндимиров, Тойкилтĕри В. Саватеев, Кораккассинчи А. Николаев, Шаптак Муркашри Ю. Афанасьев, В. Клопов çынсене тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç, нумай ыйту çине хурав пачĕç.

Çак маçтăрсен ăсталăхĕпе хаçатăн çитес номерĕсенче паллаштарăпăр-ха.

**СЛЕТ**

Çак уявран шкул ачисем те пăрăнса юлмарĕç. Район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче шкул ачисен ĕç пĕрлешĕвĕсен слечĕ иртрĕ. Вĕрентӳ пайĕн методпӳлĕмĕнче вара ачасен пултарулăх ĕçĕсенчен хатĕрленĕ курав ĕçлерĕ. Кунта та кĕр илемĕ кашни утăмрах. Ачасем те аслисенчен кая мар тутлă çимĕç ăсталама пĕлеççĕ иккен.



Ман килес!

Уявра тĕрлĕ номинацисемпе конкурссем иртрĕç пулсан та вĕсен тĕллевĕ те пĕтĕмлетĕвĕ те пĕрре: «Ĕç çынна тăрантарать. Тухăç пысăк пулсан çĕр-шыв та тĕрекрех, пуянрах пулать».

**СПОРТ ĂМĂРТĂВĔСЕМ**

Ĕçлекен çын савăнакан Тыр-пул уявĕ спорт тĕсĕсемпе те пуян пулчĕ. Район центрĕнче çак кун ĕçсем вĕçленнĕ май канăва килнĕ кашни ĕçчен хăйне килĕшекен спорт тĕсĕпе кăсăкланма пултарчĕ.

Спорта юратакансем уявра район центрĕнчи Спорт çурчĕ патне йышлă пуçтарăнчĕç. Кунта минифутболла выляссипе тата кире пуканĕ çĕклессипе район чемпионачĕ иртрĕ. Минифутболла выляссипе курма пынисене «Юнга», Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн, Çатракассинчи вăтам шкул командисем хăйсен ăсталăхĕпе савăнтарчĕç.

Кире пуканĕ çĕклессипе Муркашсемпе Юнкăсем тата Москакассисем маттуртарах пулнине никам та хирĕçлеймĕ.

«Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнчи спорт залĕнче те çак кун халăх йышлă пулчĕ. Кунта ĕç коллективĕсем хушшинче Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Кубокĕшĕн спартакиада вăйăйисем иртрĕç.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Хамăр сывлăх хамăр алăра

# «Виналайт» компани сĕнекен продукци пуриншĕн те усăллă

Паянхи пурнăç тăтăшах çĕнĕлĕхсен шыравĕнче пулма хистет. Пысăк хăвăртлăхлă аталану пахалăхлă тĕрлĕ технологисемпе паллашма, тĕнче шайне Интернет урлă тухма май парать. Çавна май вăйлă аталанакан çĕр-шывсенче туса кăларакан пысăк пахалăхлă продукци çинчен пĕлме тата усă курма, çавăн пекех сывлăхшăн усăллă чылай продукципе паллашма пултаратпăр. Аса илер-ха, Китайра кăларакан продукцие маларах хурлама пăхаттăмăрччĕ, халĕ вара кашниех вĕсен продукципе усă курать. Çапла вара вĕсем кăларнă тĕрлĕ йышши компьютер, техника, пĕтĕмĕшле ытти тавар тĕнче шайне тухрĕ.

Çавăн пекех вĕсем халĕ сывлăхшăн усăллă, çирĕп тĕрĕслев витĕр тухнă халăхсем хушшинчи «Виналайт» корпорацийĕн продукцине хатĕрлесе кăларчĕç. Эпĕ, çак компанин представителĕ, тĕрлĕ чире хирĕç кĕрешме пулăшакан тата хăш-пĕр чиртен сыхланма май паракан пысăк пахалăхлă продукципе комплекслă майпа усă курма пуçларăм. Ăна валли вара манăн сăлтавĕ пысăк пулчĕ. Хамăн тата çывăх ытти çынсен сывлăхĕсем тăтăшах хавшанăран кулленхи пурнăç тĕксĕм те кичем туйăнатчĕ. Чирчĕртен епле майпа хăтăлмалла тата сыхланмалла текен шухăш мана пĕр самантлăха та канăç памарĕ. Эпĕ чылай хушă медицинăн тĕрлĕ специалисчĕсем патĕнче тĕрĕслевре пултăм, больницăра та чылай сиплентĕм, анчах та уссине ытлах сисмерĕм.

Çапла вара ман пекех тĕрлĕ чирпе нушаланакан, «Виналайт» компанийĕн тĕрлĕ продукцийĕпе усă куракан çынсем мана унăн ырă енĕсене каласа кăтартрĕç. Малтанах хам пĕлмен компани продукцийĕнчен шиклентĕм пулин те чир нушалантарни манăн хумханăва сирчĕ. Продукципе комплекслă майпа усă курнипе вара хама аван туятăп, пурнăçа халĕ савăкрах куратăп. Хамăн çывăх çынсем те «Виналайт» продукцине шанаççĕ, унпа куллен усă кураççĕ.

Халĕ эпĕ хисеплĕ хаçат вулакансене пысăк пахалăхлă, сывлăхшăн чăннипех те усăллă, экологи енчен таса продукци çинчен кĕскен кăна каласа парасшăн. Манăн тĕп тĕллев тĕрлĕ чирпе нушаланаканăн йывăрлăхне каштах та пулин çăмăллатасси, çирĕп сывлăхлисене чир-чĕртен асăрхаттарасси пулса тăрать. Эпĕ улталаса ытларах продукци сутассишĕн пачах та çунмастăп. Эсир вара тĕплĕн кăна шутласа пăхăр.

2007 çулта тĕнче шайне тухнă «Виналайт» компани пире тĕрлĕ продукци сĕнме пуçларĕ. Анион (çын организмĕшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ) тытăмĕшлĕ респиратор маски, сывлăха сыхлама май паракан Лав Маан маркăллă гигиена тĕлĕшĕнчи хатĕр (ача-пăча подгузникĕ, пур ӳсĕмри арçынсемпе хĕрарăмсем усă курмалли гигиена прокладки), шăл тасатмалли паста; радиацирен хӳтĕлекен карта, радиацирен хăтаракан стикер тата ытти хăш-пĕр продукци. Эпĕ пысăк пахалăхлă продукцисен ырă енĕсем пирки çынсене ăнлантарас тата ăна туянма кăмăл тăвакансем патне продукцие çитерес тĕлĕшпе Чăваш Республикинче, Чул хула облаçĕнче ĕçлетĕп, ĕç калăпăшне ытларах та сарма палăртатăп. Ку енĕпе нумаях тăрăшмастăп пулин те продукципе усă куракансен ырă сăмахĕсене илтме ĕлкĕртĕм.

«Виналайт» компанин пĕр тĕрлĕ продукцинче кăна 5800 единица чухлĕ анион, тинĕс хĕрринчи сывлăшра 5000 единица, лăсăллă вăрмансенче 4000 единица, эпир куллен сывлакан сывлăшра вара 500 единица кăна. Çын организмĕнчи веществосен ылмашăвĕнче анион пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вăл юнри щелоча тасатма, кальци, кали, натри шайне ӳстерме пулăшать. Çак шайлашу вара мышца тата нерв волокнисен ĕçне хăпартать. Анион çавăн пекех катион («отход» дыхания) шайне йĕркелет. Çавăн пекех организм вăхăтсăр ватăласси те унпа çыхăннă. Эпир халĕ пурте электричествăпа ĕçлекен тĕрлĕ йышши приборпа усă куратпăр. Унсăр пуçне пирĕн тавра мĕн чухлĕ предприяти сиенлĕ хутăш кăларать. Анион кирлĕ шайра пулни вара организмри пĕтĕм ĕç-хĕле йĕркелет.

Пĕтĕмĕшле илсен анион юнри гемоглобин шайне ӳстернипе пирĕн ăс-тăн ĕçĕ йĕркеленет, вăй хурса ĕçлеслĕхе хăпартать, нерв тытăмне çирĕплетет, организма тĕрлĕ чир-чĕре хирĕç кĕрешме хатĕрлет. Акă мĕншĕн харпăр хăй сывлăхĕшĕн тăрăшакан çынсем тинĕс хĕрне, лăсăллă вăрмансенчи кану çурчĕсене кайма тăрăшаççĕ. «Виналайт» компани продукцинче вара анион шайĕ татах та ытларах терĕмĕр. Акă чи малтан мĕнпе илĕртет туянакансене анион тытăмĕшлĕ маска, сывлăха сыхлама май паракан гигиена тĕлĕшĕнчи тĕрлĕ хатĕр.

Акă, тĕслĕхрен, маска грипп вăхăтĕнче усă курма питĕ меллĕ тата усăллă. Сунас ернĕ вăхăтра ăна çыхсан кĕске самантрах чир-чĕр çăмăлланать. Çавăн пекех унпа медицина учрежденийĕсенче те питĕ анлă усă кураççĕ.

Хамăр тата ытти çĕр-шывра туса кăларнă, халиччен усă курнă продукцие «Виналайт» продукципе танлаштарсан пысăк уйрăмлăх куça курăнать. Хĕрарăмсемпе арçынсем усă курмалли гигиена прокладкине çемçе пусмаран, рис крахмалĕнчен, анион лентинчен, пĕтĕмĕшле илсен экологиллĕ таса продукцирен хатĕрленĕ. Ыттисем туса кăлараканни вара полиэтиленран, сиенлĕ хутăшлă çилĕмрен, иккĕмĕш хут усă куракан материалтан (макулатура, кивĕ пусма) хатĕрленĕ. Çакă йăлтах чир-чĕр, вăл шутра рак чирĕ сарма май парать. Халĕ чылайăшĕ ача-пăчана тĕрлĕ подгузникпа ӳстерет. Унпа усă курни мĕн патне илсе пырасси вара кунта каламасăрах паллă ĕнтĕ.

Çавăн пекех ватă çынсен, çулне кура, хăйсен йывăрлăхĕ вĕсен кулленхи пурнăçĕнче хăш-пĕр тĕрлĕ чăрмав кӳрет. Çавна май «Виналайт» компани туса кăларакан гигиена прокладки тата ытти хăш-пĕр продукци вĕсемшĕн те питĕ меллĕ те усăллă.

Çапах та мĕнрен пуçланнă-ха «Виналайт» компанин ĕçĕ-хĕлĕ. Унăн пуçаруçи тĕнчере паллă çын, ăнсăртран унăн амăшĕ рак чирĕпе чирлет, вăхăтсăр çĕре кĕрет. Ăна çăлса хăварма пултарайманшăн, ыттисене тĕрлĕ чиртен асăрхаттарассишĕн пысăк пахалăхлă продукци хатĕрлесси патне пуçаруçă вунă çул пырать. Çапла вара халĕ продукци пирĕн пата та çитрĕ.

Ача-пăчасăр çемьесем те çук мар пирĕн хушăра. Çак продукципе усă курнă хыççăн ашшĕ-амăш телейне курма пултарнă мăшăра та курма тиврĕ мана. Телейлĕ хĕрарăм хăй савăнăç куççульне пĕр пытармасăр каласа пачĕ.

Тĕрĕссипе компани кăларакан чылай продукци пирки çырма пулать. Тĕплĕнрех пĕлес текенсем пирĕн пата çак адреспа пыма пултараççĕ: Муркаш сали, Гагарин урамĕ, 2 çурт, 2 хут (мунча çурчĕ) е 89278501858, 89603100129 номерпе шăнкăравласа, çавăн пекех Интернет урлă (виналайт) пĕлме пултараççĕ. Хисеплĕ çыннăмăрсем, эпир сире хамăр патра хапăл туса кĕтетпĕр, сире ку тĕлĕшри тĕрлĕ сĕнĕве пама яланах хатĕр.

**В. ПОРТНОВА,**

**«Виналайт» компани представителĕ.**

# «Çынсемпе çывăхрах пулма тăрăшатпăр»

## Ыран – Шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕн кунĕ



(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Çынсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси тата шалти ĕçсен пайĕн ĕçхĕлне тĕрĕс те уççăн кăтартса парасси – çак задачăсем те пирĕн умра тăраççĕ. Вĕсене пурнăçлассипе тимлетпĕр, çынсемпе çывăхрах пулма тăрăшатпăр эпир.

Кунсăр пуçне коррупцие хирĕç кĕрешмелли мероприятисене ирттересси, урамсенчи тата обществăлла ытти вырăнсенчи лару-тăрăва пĕр пек çирĕп тытса тăрасси, кашни преступлениех шута илесси, следстви вăхăтĕнче граждансен прависене пăсмалла марри, рассăллă е тĕн çинче никĕсленнĕ преступленисене тăвассине асăрхаттарасси те пирĕн кун йĕркинчен тухмасть.

Реформăпа килĕшӳллĕн пирĕн пай штачĕ чакрĕ, паянхи куна 87 сотрудник вăй хурать. Апла пулин те преступленисене уçса парас шая пĕлтĕрхинчен чакармарăмăр. Иртнĕ вунă уйăхра пурĕ 329 преступлени тунине палăртрăмăр. Ытларахăшне пĕрре преступлени тунă çынсем тата ӳсĕр çынсем туни паллă. Шел пулин те, çынна вĕлернĕ тĕслĕхсен хисепĕ ӳсрĕ – пиллĕке çитрĕ, обществăлла вырăнсенче йĕркелĕхе пăснă тĕслĕх те вунă уйăхра çирĕм тăххăрпа танлашрĕ.

Шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем хăйсен тăрăшулăхне ӳстернипе пĕрлех профилактика ĕçĕ çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Профилактика ĕçне вăйлатасси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, унти активпа тачă çыхăнса ĕçленинчен те нумай килет. Çапла вара уявпа хамăрăн пайра ĕçлекенсене, ветерансене саламланипе пĕрлех пирĕнпе тачă çыхăнса ĕçлекенсене, пире пулăшса пыракансене пурне те тав сăмахĕ калатăп. Йĕркелĕх пултăр тесе пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлесен ӳсĕмсем пулмаллах.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕнче 16 хĕрарăм сотрудник тăрăшать. Преступленисене уçса парассинче çак пакунлă пикесен тӳпи те пысăк.**

## Аукцион

# Извещение о проведении открытого аукциона

Администрация Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее - аукцион), открытому по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договора аренды муниципального имущества - объектов теплоснабжения, расположенных на территории муниципального образования – Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, предназначенных для эксплуатации и осуществления передачи и распределения тепловой энергии потребителям.

**Основание:** постановления администрации Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики № 81 от 20.10.2011 г., № 82 от 20.10.2011 г.

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429545, Моргаушский район, д. Тренькино, ул. Новая, 5, телефон/факс (83541) 66-7-31, 66-7-33, e-mail: http://gov.cap.ru/main.asp?govid=421.

**Контактные лица:** Перцев Ю.В., глава администрации Ильинского сельского поселения, тел.: (83541) 66-7-33.

**Перечень объектов теплоснабжения, выставленных на торги (аукцион): Лот № 1**

| № п/п | Наименование объекта, техническая характеристика | Местонахождение объекта | Литер | Протя-жен-ность (м.) | Год ввода в эксплуатацию здания | Инвен-тар-ный номер БТИ | Пло-щадь (м.кв.) |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Теплотрасса ул. Новая, сооружение – подземная теплосеть | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское с/пос., д. Тренькино, ул. Новая, | Г1 уч. 1-Г1 уч.4 | 1010,0 | 2004 | 4148 | |
| 4 | Котельная КП Тренькино, двухэтажное панельное здание | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское с/пос., д.. Тренькино, ул. Новая, | А | | 1983 | 4062 | 251,2 |

**Начальная (стартовая аукционная) цена объектов теплоснабжения (размер годовой арендной платы)** – 46700 (Сорок шесть тысяча семьсот) рублей.

**Сумма задатка** – 10 % от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы нежилого здания.

**Шаг аукциона** – 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы нежилого здания.

**Информация о проведении аукциона:**

**Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:**

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в администрации Ильинского сельского поселения по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Финансовый отдел администрации Моргаушского района Чувашской Республики (Администрация Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики), ИНН 2112389445, БИК 049706609 р/с 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ № 8613 г. Чебоксары, л/с 05123В00012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района Чувашской Республики, к/с 30101810300000000609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (задаток на участие в аукционе), дату аукциона, номер лота.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

4. Копии документов, удостоверяющих личность (для иных физических лиц).

5. Копии учредительных документов заявителя (для юридических лиц);

6. Документ, подтверждающий полномочия лица на осуществление действий от имени заявителя – юридического лица (копия решения о назначении или об избрании либо приказа о назначении физического лица на должность, в соответствии с которым такое физическое лицо обладает правом действовать от имени заявителя без доверенности (далее – руководитель).

7. Заявление об отсутствии решения о ликвидации заявителя – юридического лица, об отсутствии решения арбитражного суда о признании заявителя – юридического лица, индивидуального предпринимателя банкротом и об открытии конкурсного производства, об отсутствии решения о приостановлении деятельности заявителя в порядке, предусмотренном Кодексом Российской Федерации об административных правонарушениях;

8. Лицензия на осуществление передачи и распределения тепловой энергии потребителям.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 09.11.2011 по 09.12.2011.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тренькино, ул. Новая, 5.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договора аренды объектов электроснабжения и теплоснабжения может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, и определение участников аукциона состоится на заседании Комиссии - 12.12.2011 г. в 15.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тренькино, ул. Новая, 5.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды. Договор аренды заключается в срок не позднее 5 рабочих дней со дня подписания протокола. Время проведения открытого аукциона - 14 декабря 2011 года (по московскому времени): Лот № 1- в 14 ч. 00 мин.

## Прогноз погоды

| | среда 9 ноября | | | | четверг 10 ноября | | | | пятница 11 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -2 | -2 | -2 | -4 | -7 | -8 | -5 | -7 | -10 | -11 | -7 | -7 |
| Давление мм | 731 | 734 | 740 | 745 | 748 | 750 | 752 | 755 | 756 | 756 | 756 | 755 |
| Влажность % | 100 | 100 | 92 | 90 | 97 | 98 | 90 | 91 | 100 | 97 | 89 | 93 |
| Ветер м/сек | С-З 2 | В 4 | В 6 | С-В 6 | С-В 5 | С-В 6 | С-В 6 | С-В 5 | С-В 3 | С 1 | С-З 3 | С-З 1 |
| Солнце восход/заход | | 08:16 | 16:56 | | | 08:18 | 16:55 | | | 08:20 | 16:53 | |
| Луна восход/заход | | 15:58 | 06:44 | | | 16:20 | 07:55 | | | 16:48 | 09:03 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

* * *

**Итоги проведения публичного слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Орининского сельского поселения Моргаушского района ЧР.**

**02 ноября 2011 года прошли публичные слушания по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».**

**На указанных выше публичных слушаниях было принято следующее решение:**

**Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».**


## Пĕлтерӳсем. Объявления




**Февралĕн 20-мĕшĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-950-59-35, 60-0-35.**

* * *

**11 уйăхри хура-шурă тынашки усрама сутатпăр. Хакĕ каласса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-906-388-66-04.**

* * *

**В г. Чебоксары требуется администратор для работы в офисе. Тел.: 8-953-449-65-64.**

* * *

**Продается автомобиль ВАЗ-2121 «Нива», на ходу, можно на запчасти. Тел.: 8-906-134-27-50.**

* * *

**Продаю гусей живым весом и тушками, возможен бартер. Тел.: 8-927-66-55-900.**

* * *

**Çичĕ уйăхри хĕрлĕ-шурă тынашки сутатăп. Лайăх йăхран. Хорнуй ялĕ. Тел.: 8-960-310-90-75.**

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября (подвал, балкон). Тел.: 8-906-136-13-04.**

* * *

**Куплю предметы старины: ама, хушпу серебряные от 20 000 до 100 000 рублей. Деньги сразу. Возможен залог под 0,4 процента в день. Тел.: 8-937-375-88-55. 3-10.**

* * *

**12 ноября 2011 г. с 10-00 час. до 12-00 час. в Моргаушском районном отделе судебных приставов состоится прием граждан заместителем руководителя Управления Федеральной службы судебных приставов по Чувашской Республике Вассияровой Натальей Борисовной. Всех граждан, имеющих вопросы в области исполнения решений судов и иных специально уполномоченных органов, просим обращаться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, д. 5 (Моргаушский районный отдел судебных приставов).**

* * *

**Февраль уйăхĕнче çиччĕмĕш пăруламалли шурă-хура ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-666-86-57.**

* * *

**Поделюсь секретами, как заработать столько денег, сколько хочешь, и работа для врачей. Тел.: 8-906-386-07-57. 1-2.**

* * *

**Продаю картофель средний. Цена договорная. Тел.: 8-905-029-06-44.**

* * *

**Пущу квартирантов, желательно семейную пару. Дом в с. Моргауши. Обращаться по тел.: 8-927-842-71-21. Федор.**

* * *

**11 уйăхри хура тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-903-346-52-41.**

* * *

**Я, собственник земельной доли Георгиев Владислав Робинович, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 13100 кв. м. (пашни) расположенного на территории землепользования СХПК «Чемеево» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярославского сельского поселения, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:150801.**

**Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ярославского сельского поселения.**

**Компания продает анионовые прокладки, подгузники и защитные средства от электромагнитных и радиационных излучений. Тел.: 8-927-850-18-58. 1-10.**

**В с. Моргауши по ул. Красная Площадь, д. 3 (при «Станции юных техников») предоставляем услуги на все виды ШИНОМОНТАЖНЫХ РАБОТ, ремонт боковых порезов на шинах, ремонт бескамерных колес, балансировка колес. Принимаем заказы на шиповку резины. «Переобувка» от 500 руб. Работаем с 8-00 час. до 20-00 час. без выходных. Тел.: 8-953-010-21-34, 8-905-029-75-90. 1-2.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-5.**


**К СВЕДЕНИЮ ВОДОПОТРЕБИТЕЛЕЙ**
**Кадикасинского, Б.Сундырского, Юнгинского, Москакасинского сельских поселений!**

ООО « Жилкомсервис» предупреждает, что несвоевременное погашение задолженности за водопотребление может привести к отключению водонапорных башен энергоснабжающей организацией из-за несвоевременной оплаты за электроэнергию.

Задолженность населения за водопользование на 01 ноября составляет 755691 руб.

Б.Сундырское сельское поселение 324121 руб.
Кадикасинское сельское поселение 244886 руб.
Юнгинское сельское поселение 139446 руб.
Москакасинское сельское поселение 47238 руб.

Просим срочно погасить задолженность за водопользование для оплаты за электроэнергию. Справки по тел. 69-4-50».

ООО «Жилкомсервис» сообщает о ходе реализации заявок на подключение к системе водоснабжения и водоотведения. За 3 квартал 2011 года было подключено к системе водоотведения -0 пользователей, к системе водоснабжения -4 пользователя, в том числе в Сундырском сельском поселении -3 пользователя, в Юнгинском сельском поселении -1 пользователь. Подробности на сайте ООО «Жилкомсервис» http://www.gilcomservis-1.ucoz.ru

Совет и Правление Моргаушского райпо выражают глубокое соболезнование начальнику отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района Петрову А.В. в связи с тяжелой утратой – смертью отца

**ПЕТРОВА**
**Валерия Николаевича.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене параканс ем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 08.11.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4362.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.